39-33

Иван Ивник



# Ăшă çил

Чăвашгосиздат 1939

ИВАН ИВНИК

# ӐШӐ ҪИЛ

САВӐСЕМ

Ӳкерчӗкӗсем Г. Харлампьевӑн

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1939

*КĔÇĔН ТАТА ВĂТАМ ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЛЛИ*

## ТУПМАЛЛИ

*Стр.*

Çурхи хаваслăх . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Çуркунне . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 4
Тул çутăлать . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5
Пирĕн Май . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 6
Амăшĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Каçхи ўкерчĕк . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
Ирхи Атăл . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 10
Ылттăн пулă . . . . . . . . . . . . . . . . . . 11
Пирĕн костер . . . . . . . . . . . . . . . . . . 12
Çăмăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 14
Юрăçсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 15
Ĕç умĕнхи . . . . . . . . . . . . . . . . . . 16
Çĕнĕ пурнăç калчисем . . . . . . . . . . . . . 17
Кĕркунне . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 18
Чапай . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 19
Хĕллехи каç . . . . . . . . . . . . . . . . . 21
Сар автан . . . . . . . . . . . . . . . . . . 22
Елка . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23
Сыхлăх юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . 24

Редактор Кузьма Чулгась.
Техн. редактор Ф. Яковлев.

Уп. Чувашглавлита № 1235.
Сдано в произв. 3/VI-39 г.
Подп. к печати 8/VII-39 г.
Ф. бум. 72x105 1/32. Об.0,75 п. л.
Заказ № 373. Тир. 5000 экз.

Типография № 1 НКМП ЧАССР
г. Чебоксары.



## ÇУРХИ ХАВАСЛĂХ

Çӳл тӳпе кăвак та аслă,
Сар хĕвелĕ тӳпере.
Сыв-и эс, çурхи хаваслăх,
Астăватăн-и пире?

Ирĕн-кунĕн чĕвĕл-чĕвĕл
Салакайăк савăнать.
Пур çĕрте те сасă-кĕвĕ.
Çур килет—мухтав ăна!

Йăпăр-йăпăр йăпăрка пек
Ăшă çил юхса иртет.
Çур тивлечĕн пысăк чапĕ
Янăрать паян пирте.

Униче урамĕ тăрăх
Шăнкăр-шăнкăр шыв юртать.
Çил çӳрет япшар та вăрăм.
Çут хĕвел кулать юртан.

Пахчара чăлт-шурă хурăн,
Савăнмалăх чăн та пур:
Ун çинчен шăнкăрчă курĕ
Пĕчĕкçеççĕ çĕнĕ пӳрт.



## ÇУРКУННЕ

Çитрĕ çур. Каллех туятăп:
Ăшă çил хавас çÿрет.
Эп куратăп: анлă Атăл
Ейÿре.

Кăнтăртан килсе иртеççĕ
Кайăк-хурсен картисем.
Вĕсене халь илĕртеççĕ
Кÿлĕсем.

Çĕмĕртсем мухтавлăн çурчĕç
Шурă-шурă çеçкине.
Иленет-çке вĕлле хурчĕ
Ун çине.

Кĕтÿсем çÿреççĕ тулăх,
Курчĕç кĕтнĕ ырлăха:
Ешĕл тумлă аслă улăх,
Сарлака.

Çуркунне. Каллех туятăн:
Ăшă çил хавас çÿрет.
Эс куратăн: анлă Атăл
Ейÿре.



## ТУЛ ÇУТӐЛАТЬ

Çӑлтӑрсем сӳнеççӗ
Ерипен, тирпейлӗн,
Уйӑх шурса çитрӗ
Çӳлӗ тӳпере.
Халӗ çӗкленес пек
Вашават хӗвелӗ
Тухӑçа илемлӗн
Çулӑм ӳкерет.

Улӑхра, шӑрçа пек,
Кӗмӗлӗн-мерченӗн
Чӑмӑртанчӗ сывлӑм—
Çакӑттӑм мӑя.
Эреветлӗ шӑпчӑк
Уншӑн хӗпӗртенӗ,
Эх, юрри-çке уççӑн
Чӳхенсе каять...

Пахчари шап-шурӑ
Çеçке çурнӑ çӗмӗрт,
Ӗç çине васканӑн,
Ӑйхине сирет.
Вӑл та пӗлет пулӗ:
Чаплӑ пирӗн ӗмӗр,
Хапӑллатпӑр эпӗр
Çак хавас ире.




## ПИРЁН МАЙ

Ялкăшать хёвелё,
Ялкăшать тёнче:
Ялавпа тухатпăр
Май уявёнче.

Ешёрет çёршывё,
Кунё хёмленет,
Юррине юрлатпăр
Чăн илемлине.

Ирёк те мухтавлă
Чаплă ёмёре
Эпёр халь мухтатпăр
Юрă-кёвёре.

Пултаруллă ушкăн,
Пултаруллă çар—
Юрататпăр эпёр
Çёнё пурнăçа.

Ирёк пирён пурнăç,
Ирёклё—çёршыв.
Тăшмансем кёреймёç
Ун çине пёр шит.

Ёç тёнчин илемё
Çитё пур тёле:
Пирёнпе—хавасл ăх,
Пирёнпе—телей!



## АМĂШĔ

Анат-касра, кĕтесре,
Сад пахчийĕн варринче
Шурă пӳрт ларать.
Сад пахчинчи çав пӳртре
Ывăл-хĕрсĕр, пĕр пĕччен,
Карчăк пурăнать.

Вăхăчĕ çитсен пĕр пек
Шурă-шурă чечекпе
Тумланать пахча.
Çакăн пек чух, пĕр ирпе,
Карчăк хăйĕн ачипе
Уйрăлнă тахçан.

Пулнă вăхăт: ун чухне
Совет çĕрне пĕтерме
Килнĕ адмирал.
Карчăк хăйĕн ывăлне
Ăна хирĕç кĕрешме
Пилленĕ ăс-хал.

Йĕкĕт—хĕрлĕ партизан
Çапăçăван хирĕнче
Шеллемен юние.

Шăп çулталăк çапăçсан,
Çеçен хирĕн варринче
Хунă вăл пуçне.
Ватă карчăк кашни çул,
Чечеке ларсассăн сад,
Кĕтет ывăлне.
Анчах ывăл килес çук...
Киленеймĕ тек пăхса
Карчăк ун çине.

Анчах карчăк хурлă мар,
Вăл мăнаçлă, вăл хастар,
Вăл çапла пуплет:
Тепĕр хут килсен тăшман,
Çак кунçулшăн çапăçма
Хам та кайăп, тет.



## ÇĚНĚ ПУРНĂÇ КАЛЧИСЕМ

Ылттăн тумлăн ялкăшса
Килчĕ тулăх кĕркунне.
Ларса тухнă савăнса
Эпĕр партă хушшине.

Шкулĕ çутă тап-таса,
Пĕтĕм кăмăл çĕкленет.
Вĕренетпĕр тăрăшса
Эпĕр халĕ кулленех.

Эпĕр — Сталин ачисем,
Çĕнĕ пурнăç калчисем.
Пире лайăх — çитĕнме,
Пире лайăх — вĕренме!



## КĔРКУННЕ

Пăшăл-пăшăл пăшăлтатрĕ,
Чăшăлтатрĕ аслă сад,
Ылттăн тумĕпелен ĕнтĕ
Уйрăлать вăл йăсласа.

Пăшăлтатрĕç, чашăлтатрĕç,
Вĕçсе ӳкрĕç çулçăсем.
Каламарĕç-ши вĕсем те:
Сывă пулăрах, тесе?

Çулçă тăкрĕ те, шăпланчĕ...
Садăн ĕçĕ çавă çеç.
Пилешсем кăна тĕтреллĕн
Вăйсăр вут пек тĕлкĕшеç.



# ЧАПАЙ

Лăпкă мар-çке Урал шывĕ,
Ахăрать, йĕрет.
Урал шывĕ çийĕн харсăр
Пулемет кĕрлет.

Хура хумлăн, хĕрлĕ юнлăн
Пăтранать Урал.
Тăшмансем çитсе çывхарчĕç,
Килчĕç хуп-хура.

Тăшмана ялан çĕнтернĕ,
Çĕмĕрнĕ Чапай.
Сăртсем урлă, хирсем урлă
Kaçнă вăл чаппа.

Казаксем-и çывхараççĕ,
Е килет Колчак, —
Чапая ялан та паллă
Çĕнтерӳ анчах.

Колчака вăл хуса янă, —
Ирĕкре Урал.
Анчах вилчĕ пирĕн паттăр—
Путрĕ авăра.

Çитĕнет Совет çĕршывĕ,
Çĕкленет пĕрмай.
Çĕн тĕнчешĕн пуçне хучĕ
Командир Чапай.

Хулара халь юрă, юрă,
Юрă — ялсенче.
Асăнса юрлатпăр эпĕр
Паттăрсем çинчен.





## ХĔЛЛЕХИ КАÇ

Анне арлать. Вар-сӳсĕн çипĕ
Йĕрлет пĕр вĕçĕмсĕр йĕре.
Сĕм юмахри усал ачи пек
Çилсем ӳлеççĕ мăръере.

Пӳрт умĕнчи лаштра юманăн
Тураттисем вăрçаç çиле,
Ĕмĕрĕнче те шик пулман ун,
Ларать вăл тĕрĕс-тĕкĕлех.

Пирĕн лутра пахчалăк витĕр
Кил хушшине юр хĕвтерет.
Çутăласпа çил-тăвăл иртĕ,
Тухса çул уçăп иртерех.

Çемçен те ăшшăн йăлтăрать ав
Çап-çутă лампа, ĕмĕт пек.
Эп харсăр Пушкина вулатăп,
Çунатăп унăн хĕмĕпе.

Анне арлать. Вар-сӳсĕн çипĕ
Йĕрлет пĕр вĕçĕмсĕр йĕре.
Сĕм юмахри усал ачи пек
Çилсем ӳлеççĕ мăръере.

## САР АВТАН



Кики-рикки сар автан
Çунат çапса авăтать.
Кики-рикки сар автан,
Мĕншĕн хыттăн авăтатăн?
Тухса пăхсам, анне,
Тулă сапса пар.

Кикак-кикак шурă хур
Çунат сарса киклатать.
Кикак-кикак шурă хур,
Мĕншĕн хыттăн кикаклатан?
Тухса пăхсам, аппа,
Сĕлĕ сапса пар.



# ЕЛКА

Вăйă-кулă
Пирĕн тулăх,
Янăраççĕ юрăсем.
Илĕртӳллĕ пирĕн ёлка,
Пурте, пурте килĕрсем!

Вăрăм чăрăш,
Ешĕл чăрăш
Тĕлĕнтермĕш çутăлать.
Мĕнешкел вăл çĕклентерчĕ
Пирĕн çăмрăк кăмала!

Хĕрлĕ çăлтăр,
Çутă çăлтăр
Çутăлать ун тӳпинче.
Килĕшӳллĕ, тараватлă
Пире тĕллĕн çут тĕнче!

Шур упи те,
Хĕл-мучи те
Савăнаççĕ ёлкăра.
Пурте, пурте тулăх пирĕн
Çакă çĕнĕ пӳрнăçра!

Юрлама та,
Ташлама та
Маçтăр эпĕр, ачасем.
Сывă пул, çĕнçул уявĕ,
Эс каллех, каллех килсем!




## СЫХЛĂХ ЮРРИ

Явăнасшăн пуç çинче
Чунилли çăханĕ.
Шухăшлать вăл: пур енчен
Юн ĕçме тухам-и.

Советсенĕн çĕрĕнче
Вилĕм çўретесшĕн.
Ун çине вăл пур енчен
Вăрçăпа килесшĕн.

Явăнаймăн эс, çăхан,
Кăлăхах супатăн.
Е ытлах та, хăтлансан,
Вилĕмна тупатăн.

Вăйлă эпĕр çĕр çинче,
Сывлăшра та вăйлă.
Тинĕссем те, вăл енчен,
Пирĕннех мухтавлă.

Эпир—аслă вăй-хăват,
Çĕнтерўллĕ эпĕр.
Пирĕн аслă çĕршыва
Пусăм та кĕреймĕр.

Явăнасшăн пуç çинче
Чунилли çăханĕ.
Явăнаймĕ,—çийĕнчех
Вилĕ персе анĕ!

Цена 50 коп.

2334

ИВАН ИВНИК

ТЕПЛЫЙ ВЕТЕР

на чувашском яз.

Госиздат ЧАССР